«Туслăх»
26 (7518) июль (утă) 9 2021 çул

Нурлатри чăвашсем историе кĕрсе юлĕç

Чăваш патшалăх гуманитари ăслăлăхĕсен институчĕн наука ĕçченĕсен пирĕн районти наукăпа тĕпчев экспедицийĕ ăнăçлă вĕçленчĕ. Унта Галина Ильина, Евгения Сергеева, Ирина Семенова тата Любовь Бушуева ăсчахсем хутшăнчĕç.

Еткерлĕх

Маргарита **Литта**,
Г. Терентьевăн сăн ÿкерчĕкĕсем

Иртнĕ эрне тăршшĕпе вĕсем ялсене тухса çÿресе чăваш халăхĕн йăлари культурине тĕпчерĕç, ватăсемпе тĕл пулса калаçрĕç, хăйсене кăсăклантаракан ыйтусем çине хуравсем илчĕç.

Киклĕпуç, Пĕчĕк Хăмăшлă, Чăваш Менчи, Салтакъел, Якаел, Тĕкĕрмел, Сосновка, Ялавăр, Пÿлеркÿл – экспедици маршрутне кĕнĕ кашни ялта ăсчахсем хăйсене кăсăклантаракан темăсем тăрăх пысăк ĕç иртерчĕç. Пĕрремĕшĕнчен, йăла-йĕркесемпе паллашрĕç, иккĕмĕшĕнчен, авалхи юрă-кĕвĕсене итленĕ май тÿрех нотисене те çырса пычĕç, виççĕмĕшĕнчен, чăвашсен вилтăприсене тĕпчерĕç тата ытти те. Экспедицие пĕтĕмлетнĕ хыççăн коллективлă монографи пичетленсе тухĕ. Ăна ТР Наукăсен академийĕн Чĕлхепе литература тата истори институчĕн „Тутарстанри халăхсен культурин калейдоскопĕ“ проектне тĕпе хурса хатĕрлĕççĕ. Хальхи вăхăтра çакăн пекех экспедицисем республикăри удмуртсем, марисем, мăкшăсем тата ытти халăхсем йышлă пурăнакан районсенче те иртеççĕ. Вĕсемпе пĕрле Нурлатри чăвашсем те историе кĕрсе юлĕç. Пирĕн вара Шупашкарти ăсчахсене чăннипех те мĕнпе тĕлĕнтермелли пурччĕ.

– Яковлев шкулĕнче пĕлÿ туяннă Нина Петровна Будяшкинăпа тĕл пулни кăна мĕне тăрать, – тет Халăхсен туслăхĕн çурчĕн директорĕ Галина Терентьева. Шăп вăл делегацие ялсем тăрăх илсе çÿрерĕ, мĕнпур енчен пулăшса тăчĕ. – Нина Петровна 92 çулта пулнине пăхмасăр, ăслă-тăнлă калаçать, хăйĕн ĕмĕрĕнче пулса иртнĕ пĕлтерĕшлĕ пулăмсене лайăх астăвать. Вăл пурнăçĕ тăршшĕпе Киклĕпуçĕнчи шкулта математика вĕрентекенĕ пулса вăй хунă, ялти ачасен темиçе ăрăвне пĕлÿ панă. Ентешсен хисепне туйса кун кунлать.

Районти пултарулăх ушкăнĕсем хăйсен репертуарĕнчи тата пĕчĕккĕллех ашшĕ-амăшĕнчен вĕренсе юлнă халăх юррисене шăрантарчĕç. Вĕсем пĕри те пĕрпек мар. Кашни ялăн хăйĕн юррисем теме те пулать. „Пурне те тÿрех аса илеймĕн. Мĕнле кăна юрă юрламан ĕлĕк-авал. Ăна купăс сассипе пĕрле итлесен чун тата та савăнать. Халĕ ялсенче вĕсене сайра хут кăна илтме пулать. Ырă йăласем манăçа тухасси шиклентерет, çакăншăн намăс пулмалла пире. Çапах та атте-анне юрланă юрăсем çухалмасса шанатпăр“, – терĕç Киклĕпуçĕнчи кинемейсем. „Акă киле çитсенех тата тепĕр юрра аса илĕп“, – йăл кулчĕ çеç вĕсенчен пĕри.

Чăваш Менчинче пурăнакансем Шупашкарти хăнасене тараватлă кĕтсе илчĕç.

Тĕне кĕнĕ чăвашсен Пĕчĕк Хăмăшлă çывăхĕнчи авалхи масарĕ те пысăк тимлĕхе тивĕç пулчĕ. Унăн историйĕпе экспедици членĕсене Нурлатри Илле чиркĕвĕн настоятелĕ Александр Кузьмин иерей паллаштарчĕ. Вăл масар территорине карта тытасси, историллĕ справка тăвасси çинчен ыйтăва нумаях пулмасть район пуçлăхĕ тĕн представителĕсемпе пĕрле ирттернĕ çавра сĕтел хушшинчи калаçура та çĕкленĕ пулнă. Район ертÿçисем çак пуçарăва ырласа йышăннă. Александр атте ăсчахсемпе Нурлат районĕнчи чăвашсен историпе культура еткерлĕхне тĕплĕнрех тĕпчесси çинчен калаçса татăлчĕ.

Ăсчахсем авалхи юрă-кĕвĕсене итленĕ май тÿрех нотисене те çырса пычĕç.

Пĕчĕк Хăмăшлăри масарăн историйĕпе Илле чиркĕвĕн настоятелĕ Александр Кузьмин иерей паллаштарчĕ.

– Çакăн пек масарсем районта тата та пур, вĕсене археологсем тĕпчесен аван пулмалла, – сĕнчĕ район пуçлăхĕпе Алмаз Ахметшинпа иртнĕ тĕл пулура наука ĕçченĕ Евгения Сергеева. Экспедицие тĕпе хурса вăл историе тивекен тĕпчевсем ирттерчĕ.

Алмаз Салимович ку енĕпе ĕçе пуçăнасси пирки шухăшсем унччен те пулни çинчен пĕлтерчĕ. Анчах, кашни ĕçĕн хăйĕн вăхăчĕ пур, паллах.

Пĕтĕмĕшле, район пуçлăхĕ Нурлат çĕрĕ çинчи халăхсем ĕмĕрĕмĕрех килĕштерсе пурăннине тимлĕх уйăрттарчĕ. Пĕр-пĕрин культурипе историне тĕпчени, йăла-йĕркесене упраса хăварма тăрăшни те тĕп вырăнта, паллах.

– Чи пĕлтерĕшли – çынсем туслă пурăнни. Килĕшÿлĕхпе шанăç çинче никĕсленекен хутшăнусене пулас ăрусене парса пымалла, пĕр-пĕрне пулăшса тăмалла, – пĕлтерчĕ хăйĕн шухăшне Алмаз Салимович.

Çакăнпа экспедици ертÿçи Галина Ильина туллин килĕшрĕ. Хăйĕн ĕçĕнче çак пахалăхсене тимлĕх уйăракан пуçлăх пысăк хисепе тивĕç терĕ.

– Пирĕншĕн тĕпчевсене шăп Нурлат çĕрĕ çинче ирттерме пÿрни пысăк ăнăçу. Тĕлĕнмелле хула, ырă кăмăллă çынсем. Малашне те пĕрле ĕçлеме кăмăл пур, – пĕлтерчĕ ăсчах ĕçтешĕсен пĕрлехи шухăшне.

Нурлат вара Шупашкарти хăнасене тыткăнланă. Вĕсем Халăхсен туслăхĕн çуртĕнче, ял тăрăхĕсем хушшинчи тĕп библиотекăра, Кама леш енĕн тата Нурлат хулин историйĕн регионти музейĕнче пулса курнă. „Театральный“ скверта „Уçă микрофон“ проекта тĕпе хурса каçсерен ирттерекен концертсене те хутшăнма ĕлкĕрнĕ.

– Нурлат – пурăнма меллĕ хула. Эпĕ çул çÿревсемпе тĕрлĕ çĕршывра пулса курнă. Нурлат вара Европăри пысăках мар хулана аса илтерет. Йăлтах тирпейлĕ, чечексем куçа илĕртеççĕ. Кунтан каяс та килмест, – терĕ сывпуллашнă май искусствоведени енĕпе вăй хуракан наука ĕçченĕ Любовь Бушуева.

Эпир юлашкинчен майданра тĕл пултăмăр. Уява хутшăнмасăр каяс темерĕç экспедици членĕсем. Çакăншăн ÿкĕнме тивмерĕ. Праçник питĕ аван иртрĕ, ырă кăмăл-туйăм парнелерĕ. Çула тухас умĕн ăсчахсем нурлатсене тараватлă кĕтсе илнĕшĕн тав турĕç. „Тепре тĕл пуличчен!“ – шантарчĕç пире вĕсем.